28-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 20 пус.

1945 НОЯБРЬ 21 ЮНКУН 225 (6976) №

Иалата

Чӑваш Коммуни

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ВКП(б) Обкомӗпе Шупашкар хула комитечӗн, ЧАССР Верховный Совечӗн тата Шупашкар хула Совечӗн хаҫачӗ

Ленинпа Сталинӑн шанчӑклӑ соратникне Михаил Иванович Калинина

Хаклӑ Михаил Иванович!

Пӗтӗм Союзри Коммунистсен (большевиксен) Партийӗн Центральный Комитечӗпе СССР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ Сире, Эсир ҫурални 70 ҫул тултарнӑ ятпа чунтан чӗререн саламлаҫҫӗ.

Совет халӑхӗ Эсир Тӑван ҫӗршывшӑн тунӑ ӗҫсене питӗ пысӑка хурать. Сире коммунистсен партийӗпе совет государствине тӑвакан тата организацилекен чи паллӑ ҫынсенчен пӗри тесе шутлаҫҫӗ. Эсир хӑвӑр пӗтӗм пурнӑҫра мӗн пӗлсе ӗҫлеме пуҫланӑранпах ӗнтӗ 50 ҫул хушши ытла рабочисемпе хресченсен интересӗсемшӗн пыракан революциллӗ кӗрешӗве патӑр. Эсир яланах Ленинпа Сталин вӗрентнине ҫирӗппӗн итлесе пытӑр, Ленинпа Сталинӑн шанчӑклӑ соратникӗ пулса пытӑр.

26 ҫул хушши ытла Эсир Совет государствин аслӑ органӗн руководителӗ пулса ӗҫлетӗр. Ҫав вырӑнта ӗҫлесе Эсир 26 ҫул хушши ытла хӑвӑрӑн вӑй-хала, пӗлӗвӗре тата революционер-большевик пурнӑҫӗнчи пуян опыта рабочисемпе хресченсен тата интеллигенцин союзне ҫирӗп летес ӗҫе, Совет Союзӗнчи халӑхсем хушшинчи туслӑха вӑйлӑлатас ӗҫе патӑр. Ҫав ӗҫре Совет государствине вӑйлӑлатса чаплантарса пынӑшӑн Сире парти чунтан чӗререн хисеплет, Тӑван ҫӗршыври ӗҫ ҫынннисем хӗрӳллӗн юратаҫҫӗ.

Большевиксен партийӗ, Совет Союзӗнчи халӑхсем паян Сире Эсир Ленинпа Сталин пек ӗҫлекен государство деятелӗ, ҫирӗп принциплӑ, пуриншӗн те ҫывӑх та кӑмӑллӑ, совет рабочийӗсемпе хресченсен тата инеллигенцийӗн анлӑ массисене тӑван деятель пулса пыракан тесе саламлаҫҫӗ.

Пӗтӗм чун-чӗререн эпир Сире, хаклӑ Михаил Иванович, нумай ҫулсем хушши сывӑ пулса пирӗн аслӑ Тӑван ҫӗршыв чапӗшӗн ӑнӑҫуллӑ ӗҫлеме ырӑ сунатпӑр.

ПӖТӖМ СОЮЗРИ КОММУНИСТСЕН (БОЛЬШЕВИКСЕН) ПАРТИЙӖН ЦЕНТРАЛЬНЫЙ КОМИТЕЧӖ.

СССР ХАЛӐХ КОМИССАРӖСЕН СОВЕЧӖ

Советлӑ Социализмлӑ Республикӑсен Союзӗн Верховный Совет Президиумӗн Председательне Михаил Иванович Калинин юлташа

Хаклӑ Михаил Иванович! Советлӑ Социализмлӑ Республикӑсен Союзӗн Верховный Совет Президиумӗ Сире, Ленинпа Сталинӑн шанчӑклӑ соратникне, Совет государствин аслӑ органӗн руководительне, Эсир 70 ҫул тултарнӑ кун хӗрӳллӗ салам ярать.

Эсир 50 ҫул хушши ытла хӑмӑрӑн халӑхшӑн чун-чӗререн тӑрӑшса ӗҫлерӗр. Советлӑ Социализмлӑ Республикӑсен Союзне ҫирӗплетес ӗҫре Эсир, Совет государствин аслӑ органӗн руководителӗ пулса, чӗрӗк ӗмӗр хушши ытла ывӑнма пӗлмесӗр ӗҫлерӗр.

Эсир государствӑшӑн тӑрӑшнине, Ленинпа Сталинӑн идейисене сарса халӑх массисене воспитани парас тӗлӗшпе ӗҫленине, пирӗн ҫӗршыври рабочисемпе, хресченсемпе тата интеллигенципе таччӑн ҫыхӑнса тӑнине. Сирӗн ӑслӑлӑха тата Эсир малашнехине курса тӑма пӗлнине пирӗн нумай наципллӗ Совет Союзӗнчи пур халӑхсем те Сире ҫав тери юратса сума сӑваҫҫӗ.

Отечественнӑй аслӑ вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче Сирӗн, хӗрӳллӗ патриотӑн чӗнӗвӗ пирӗн Тӑван ҫӗршыври халӑхсене ылханлӑ тӑшмана хирӗҫ кӗрешме хавхалантарса пычӗ.

Халӗ ӗнтӗ, пирӗн ҫӗршыв ҫӗнтерӗ хыҫҫӑн, Сирӗн государствӑна тытса пырас ӗҫри пысӑк опыт Совет Союзӗнчи халӑхсене тӑшман аркатса хӑварнӑ хуҫалӑхпа культурӑна юсаса ҫӗнӗ ҫине тӑратас тӗлӗшпе тата пирӗн Совет государствин хӑватлӑхне малалла ҫирӗплетес тӗлӗшпе тӑракан задачӑсене татса пама ҫав тери пысӑк пулӑшу парӗ.

Советлӑ Социализмлӑ Республикӑсен Союзӗн Верховный Совет Президиумӗ Сире, хаклӑ Михаил Иванович, хамӑрӑн Тӑван ҫӗршыври халӑхсен ырлӑхӗшӗн нумай ҫулсем хушши тӑрӑшса пултаруллӑн ӗҫлеме ырӑ сывлӑх сунать.

СОВЕТЛӐ СОЦИАЛИЗМЛӐ РЕСПУБЛИКӐСЕН СОЮЗӖН ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМӖ

Михаил Иванович Калинин юлташа

Хаклӑ та юратакан Михаил Иванович!

ВЛКСМ Центральный Комитечӗ Сире — большевиксен партийӗпе Совет государствине тӑвакан тата организацилекен паллӑ ҫынсенчен пӗрне, Ленинпа Сталинӑн шанчӑклӑ соратникӗсенчен пӗрне—Эсир 70 ҫул тултарнӑ кун хӗрӳллӗн саламлать.

Ленинла комсомол, мӗнпур совет ҫамрӑкӗсем Сире, Сирӗн революциллӗ кӗрешӳшӗн, Эсир пирӗн ҫӗршыври рабочисен, хресченсен, интеллигенцин союзне ҫирӗплетес тӗлӗшпе тата Советлӑ социализмлӑ государствӑна ҫирӗплетес тӗлӗшпе тӑрӑшса ӗҫленӗшӗн ҫав тери юратса сума сӑваҫҫӗ.

Ленинла комсомол, совет ҫамрӑкӗсем Сире совет ҫамрӑкӗсене Ленинпа Сталинӑн большевиксен партине, Советлӑ Тӑван ҫӗршыва чун-чӗререн парӑнса ӗҫлеме воспитани панӑшӑн тав тӑваҫҫӗ. Сирӗн пурнӑҫӑрти революционер-большевикӑн таса ҫулӗ, Эсир ҫамрӑксене панӑ канашсем ӑна коммунизм ӗҫӗшӗн, Ленин—Сталин ӗҫӗшӗн вӗҫӗмренех тӑрӑшса ӗҫлеме вӗрентеҫҫӗ.

Сире, юратакан Михаил Иванович, хамӑрӑн Тӑван ҫӗршыври ӗҫҫыннисен ырлӑхӗшӗн пултаруллӑн ӗҫлеме сывлӑхлӑ та вӑйлӑ пулма пӗтӗм чунран ырӑ сунатпӑр.

Пӗтӗм Союзри Ҫамрӑксен Ленинла Коммунистла Союзӗн Центральный Комитечӗ

Советлӑ Социализмлӑ Республикӑсен Союзӗн Верховный Совет Президиумӗн Председательне Михаил Иванович Калинин юлташа

Хаклӑ Михаил Иванович!

Российӑри Советлӑ Федерациллӗ Социализмлӑ Республикӑн Верховный Совет Президиумӗ Сире—Ленинпа Сталинӑн шанчӑклӑ соратникне—Эсир 70 ҫул тултарнӑ кун хӗрӳллӗ салам ярать.

Сирӗмултӑ ҫул каярах совет халӑхӗн ирӗкӗпе Сире Совет государствин аслӑ органне ертсе пыма суйласа лартнӑ. Ҫав ҫулсем хушшинче Эсир—аслӑ вырӑс халӑхӗн шанчӑклӑ ывӑлӗ—хӑвӑрӑн мӗнпур вӑйӑра рабочисемпе хресченсен союзне, пирӗн ҫӗршыври халӑхсен туслӑхне ҫирӗплетес ӗҫе, Совет государствине ҫирӗплетес ӗҫе патӑр

Эсир большевиксен партийӗн ретӗнче нумай ҫулсем хушши революциллӗ ӗҫ тунӑшӑн, халӑхшӑн ҫав тери тӑрӑшса ӗҫленӗшӗн, ӗҫҫыннисен сарлака массисемпе яланлӑх таччӑн ҫыхӑнса тӑнӑшӑн, Сире, Совет Союзӗнчи пур халӑхсем те ҫав тери юратса хисеплеҫҫӗ.

РСФСР Верховный Совет Президиумӗ Сире, хаклӑ Михаил Иванович, хамӑрӑн аслӑ Тӑван ҫӗршыври халӑхсен ырлӑхӗшӗн малашне те пултаруллӑн ӗҫлеме нумай ҫулсем хушши ырӑ сывлӑхлӑ, вӑйлӑ та хастарлӑ пулма сунать.

РСФСР Верховный Совет Президиумӗ.

ССР Союзӗн Верховный Совет Президиумӗн Председательне Михаил Иванович Калинина

Хаклӑ Михаил Иванович!

РСФСР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ Эсир 70 ҫул тултарнӑ кун Сире—Ленинпа Сталинӑн шанчӑклӑ соратникне—хӗрӳллӗ салам ярать.

Эсир коммунистсен партийӗпе Совет государствине тӑвакансенчен тата организацилекенсенчен пӗри пулнӑ май, Сирӗн ятӑр, Михаил Иванович, пирӗн социализмлӑ аслӑ Тӑван ҫӗршывӑн хӑватлӑхӗ ҫитӗнсе пынипе таччӑн ҫыхӑнса тӑрать.

Чӗрӗк ӗмӗр хушши ытла ӗнтӗ Эсир Совет государствин аслӑ органӗн руководителӗ пулса ӗҫлетӗр. Ҫак ӗҫе Эсир хӑвӑрӑн государствӑллӑ тата партиллӗ аслӑ деятелӗн мӗнпур хӑватлӑ талантне тата хӑвӑрӑн вӑйӑра паратӑр.

Сире, Михаил Иванович, ывӑнма пӗлмесӗр ӗҫленӗшӗн, чӗререн кӑмӑллӑ пулнӑшӑн, рабочисемпе, колхозниксемпе таччӑн ҫыхӑнса тӑнӑшӑн, пӗтӗм Совет ҫӗршывӗнчи ӗҫҫыннисем ҫав тери юратаҫҫӗ.

Сирӗн мухтавлӑ юбилее эпир пирӗн халӑхӑн историллӗ ҫӗнтерӗвӗ вӑхӑтӗнче, Ленинпа Сталинӑн аслӑ партийӗн ҫӗнтерӗвӗ вӑхӑтӗнче палӑртатпӑр. Ҫав ӗҫре Эсир хӑвӑрӑн мӗнпур вӑйӑра парса ӗҫлерӗр.

Сире, хаклӑ Михаил Иванович, хамӑрӑн аслӑ Тӑван ҫӗршыва чечеклентерессишӗн малашне те пултаруллӑн ӗҫлеме нумай ҫулсем хушши сывлӑхпа вӑй сунатпӑр.

РСФСР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ.



Михаил Иванович КАЛИНИН

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМӖН УКАЗӖ

СССР Верховный Совет Президиумӗн Председательне Михаил Иванович КАЛИНИН юлташа Ленин орденӗпе наградӑласси ҫинчен

Совет государствине туса ҫирӗплетсе пырас тӗлӗшпе питех те паллӑ ӗҫсем тунӑшӑн СССР Верховный Совет Президиумӗн Председательне Михаил Иванович Калинин юлташа вӑл ҫурални 70 ҫул тултарнӑ кун Ленин орденӗпе наградӑлас.

СССР Верховный Совет Президиум Председателӗн Заместителӗ Н. ШВЕРНИК.

СССР Верховный Совет Президиумӗн Секретарӗ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1945 ҫулхи ноябрӗн 19-мӗшӗ.

МУСКАВ, КРЕМЛЬ

Калинин юлташа

Хаклӑ Михаил Иванович!

Чӑваш АССР Верховный Совечӗн Президиумӗ, Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ тата ВКП(б) Обкомӗ Эсир 70 ҫул тултарнӑ кун Сире чӗререн тав тӑваҫҫӗ.

Эсир, большевиксен партийӗпе Совет государствин паллӑ деятелӗсенчен пӗри, аслӑ Сталинӑн шанчӑклӑ та мухтавлӑ соратникӗсенчен пӗри пулнишӗн Совет Союзӗнчи халӑхсем савӑнаҫҫӗ. Эсир аслӑ вырӑс халӑхӗн—ертсе пыракан халӑхӑн паллӑ представителӗ пулнипе совет халӑхӗ лайӑх курса тӑрать. Аслӑ вырӑс халӑхӗ пирӗн ҫӗршыври нумай нацисене хамӑрӑн телейлӗ пурнӑҫа туса ӑна хӳтӗлесе хӑварма тӑванла пулӑшса пычӗ. Совет Союзӗнчи халӑхсем Сире, Эсир советлӑ Тӑван ҫӗршывӑн—Сталинла Конституци ҫӗршывӗн телейӗшӗн тата ӑна чечеклентерессишӗн тӑрӑшассине хӑвӑрӑн тӗп тӗллев туса хунӑшӑн, хӗрӳллӗн юратаҫҫӗ.

Эсир 70 ҫул тултарни СССР Верховный Советне суйлама хатӗрленнипе пӗр вӑхӑтра ҫитрӗ. Ҫавӑнпа та паян эпир Сире—чӑн-чӑн халӑх влаҫӗн паллӑ представителӗсенчен пӗрне, Тверь кӗпӗрнинчи ял ҫыннинчен тата завод цехӗнче ӗҫленӗ ҫынран СССР государство влаҫӗн аслӑ руководительне ҫитнӗскере тата совет халӑхӗ шанса панӑ ӗҫе чыслӑн тӳрре кӑларнӑскере, уйрӑмах мухтавлӑн саламлатпӑр. Хаклӑ Михаил Иванович, Чӑваш республикинчи ӗҫҫыннисем суйлав кунне мирлӗ строительствӑра ҫӗнӗ ҫитӗнӳсем тунипе кӗтсе илеҫ тата суйлав кунӗнче вӗсем хӑйсен сассисене, пӗр ҫын пек пулса, хамӑрӑн Тӑван ҫӗршывӑн тивӗҫлӗ ывӑлӗсемшӗн парӗҫ тесе Сире шантарса калатпӑр.

Чӑваш халӑхӗ Сире, хаклӑ Михаил Иванович, хӑйӗн мӗнпур чӗринчен тухакан хӗрӳллӗ саламне ярать.

Эпир хамӑрӑн халӑхӑн мӗнпур шухӑшкӑмӑлне палӑртса ҫапла калатпӑр:

Сывӑ пултӑр та нумай ҫулсем хушши пурӑнтӑр пирӗн Михаил Иванович Калинин.

Сывӑ пултӑр ӗмӗр арканми Совет государстви—чӑн-чӑн демократин тӗрекӗ!

Сывӑ пултӑр Совет государствине тӑвакан тата организацилекенӗ, большевиксен партийӗпе совет халӑхӗн ҫулпуҫӗ аслӑ Сталин!

Чӑваш АССР Верховный Совет Президиумӗ — **Чӑваш АССР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ** — **ВКП(б) Чӑваш Обкомӗ**

В. И. Ленин музейӗн Ленинградри филиалне уҫни

Ноябрӗн тӑваттӑмӗшӗнче Ленин ячӗпе тӑракан музейӗн Ленинградри филиалне питӗ чаплӑн уҫнӑ.

Мраморнӑй двореца парти работникӗсем, пропагандистсем, Ленинградри организацисен представителӗсем пухӑннӑ.

Чаплӑ ларӑва ВКП(б) Ленинград горкомӗн пропагандӑпа агитаци отделӗн заведующийӗн заместителӗ С. И. Аввакумов юлташ уҫнӑ. Вӑл ҫак музей марксизмленинизм идейисене сармалли хӑватлӑ хатӗр пулса тӑни ҫинчен каланӑ.

В. И. Ленинӑн Тӗп музейӗн директорӗ Леонтьева юлташ ҫав музейӗн Ленинградри филиалне уҫни Ленинградшӑн кӑна мар, пӗтӗм Тӑван ҫӗршывшӑн питех те паллӑ ӗҫ пулса тӑнине палӑртнӑ. Ленинградри филиалра хаклӑ экспонатсем нумай, вӗсем этемлӗхӗн аслӑран та аслӑ генийӗн В. И. Ленинӑн пурнӑҫӗпе ӗҫӗсене ҫутатса параҫҫӗ, тенӗ

Унтан йышлӑ хӑнасем музей залӗсене курса ҫӳреме тытӑннӑ. (ТАСС).

Л. Н. ТОЛСТОЙ ПРОИЗВЕДЕНИЙӖСЕНЕ АРМЯН ЧӖЛХИПЕ ПИЧЕТЛЕҪҪӖ

ЕРЕВАН. ноябрӗн 16-мӗшӗ. (ТАСС). Аслӑ вырӑс писателӗ Л. Н. Толстой вилнӗренпе 35 ҫул ҫитнӗ май Армянсен государство издательстви Толстойӑн «Детство и отрочество» ятлӑ кӗнекине армян чӗлхипе пичетлесе кӑларма хатӗрлесе хунӑ. Л. Н. Толстойӑн произведенийӗсене Арменире 70 ҫул каялла пичетлесе кӑларма пуҫланӑ. Анчах та Л. Н. Толстой кӗнекисем совет влаҫӗ вӑхӑтӗнче кӑна пӗтӗм армян халӑхӗн кӗнекисем пулса тӑнӑ. Совет влаҫӗ вӑхӑтӗнче «Война и мир», «Анна Каренина», «Хаджи Мурат», «Казаки» ятлӑ кӗнекесем, ачасем валли ҫырнӑ калавсем пичетлесе кӑларнӑ. Толстойӑн армян чӗлхипе пичетлесе кӑларнӑ кӗнекисен пӗтӗм тиражӗ 100.000 экземпляртан та иртет.

УРАЛРИ ЯЛСЕНЕ ЭЛЕКТРИЧЕСТВО КӖРТЕҪҪӖ

Уралри ялсенче Октябрь уявӗ тӗлне ҫӗнӗ электростанцисем нумай ӗҫлеме пуҫланӑ. Красноуфимск районӗнче Иргина шывӗ ҫинче туса лартнӑ гидроэлектростанцие хута янӑ. Вӑл шкула, колхоз фермисене тата «Наука», «Луч» колхозсенчи колхозниксен 170 ҫуртне ҫутӑ панӑ. Артинск районӗнче 50 киловатт вӑйлӗ электростанци ӗҫлеме пуҫланӑ

Облаҫра колхозсене электрификацилес ӗҫ пӗтӗм халӑх ӗҫӗ пулса тӑнӑ. Кӑҫал 150 электростанци туса лартнӑ, вӗсем 300 колхоза электричество вӑйӗ парса тӑраҫҫӗ. Ҫав колхозсенче кӑҫал тыррӑн чылай пысӑк пайне электричество вӑйӗпе ҫапнӑ. Хальхи вӑхӑтра тата 225 электростанци тӑваҫҫӗ, вӗсем те часах ӗҫлеме пуҫлаҫаллӑ.

Союз Советне суйлас тӗлӗшпе ӗҫлекен округсенчи суйлав комиссисен составне кандидатсем тӑратаҫҫӗ

Пуҫламӗш тата вӑтам шкулсенче ӗҫлекенсен профессиллӗ союзӗн Чӑваш Обкомӗн ларӑвӗнче Союз Советне суйлас тӗлӗшпе ӗҫлекен округсенчи суйлав комиссисен составне кандидатсем тӑратас ыйтӑва сӳтсе явнӑ.

Шупашкарти округ суйлав комисси составне Хеония Клементьевна Железкова юлташа, Шупашкарти хӗрачасен 1-мӗш номер вӑтам шкулӗнчи учительницӑна халӑха ҫутта кӑларас ӗҫре 19 ҫул ӗҫленӗскерне, кандидата тӑратма пӗрсаслӑн йышӑннӑ.

Ҫӗмӗрле округӗнчи суйлав комисси составне—Мария Михайловна Гаврилова юлташа, Ҫӗмӗрлери вӑтам шкул учительницине, 27 ҫул хушши учитель ӗҫӗнче пулнӑскерне, кандидата тӑратнӑ.

Канаш округӗнчи суйлав комиссин составне—Пантелеймон Михайлович Крылов юлташа, профсоюз обкомӗн председательне кандидата тӑратнӑ.

ВЛКСМ Шупашкар горкомӗ Шупашкар округӗнчи суйлав комиссин составне Пӗтӗм Союзри Ҫамрӑксен Ленинла Коммунистла Союзӗн хула организацийӗнчен Александра Ивановна Орешкина юлташа, Шупашкарти пир-авӑр фабрикинчи производство вӗренӳн инспекторне кандидата тӑратма йышӑннӑ.

ВКП(б) Канаш горкомӗ йышӑннӑ тӑрӑх, Канаш округӗнчи суйлав комиссин составне коммунистсен хулари организацийӗнчен Канаш горкомӗн пӗрремӗш секретарьне Алексей Иванович Киреев юлташа кандидата тӑратнӑ.

Советски районри «За коммунизм» колхозри колхозниксен пухӑвӗ Ҫӗмӗрле округӗнчи суйлав комиссин составне Исаак Никитич Никитин колхозник кандидатурине тӑратнӑ. Вӑл Отечественнӑй вӑрҫӑра «За боевые заслуги» икӗ медаль илме тивӗҫлӗ пулнӑ.

Национальноҫсен Советне суйлас тӗлӗшпе ӗҫлекен округсенчи суйлав комиссисен составне кандидатсем тӑратаҫҫӗ

Канаш хулинче Национальноҫсен Советне суйлас тӗлӗшпе ӗҫлекен округри суйлав комиссин составне кандидатсем тӑратас ӗҫ пуҫланчӗ.

ВКП(б) горкомӗ йышӑннӑ тӑрӑх, Канаш округӗнчи суйлав комиссин составне коммунистсен Канаш хулинчи организацинчен Василий Яковлевич Ямпольский юлташа тӑратнӑ. Вӑл чугун ҫул узелӗнче парти комитечӗн секретарӗ пулса ӗҫлет.

Канаш станцин коллективӗ станци начальникӗн заместительне Иван Андреевич Натимов юлташа кандидата тӑратнӑ.

Канашри вагонсем юсакан заводри рабочисен, инженерсен, техниксен тата служащисен пухӑвӗ цех начальникӗн заместителӗ пулса ӗҫлекен Иван Архипович Дубовой кандидатурине тӑратма йышӑннӑ. Вӑл Отечественнӑй вӑрҫӑра «За боевые заслуги» медаль илнӗ.

МТС-семпе ҫӗрӗҫ органӗсен профсоюзӗн облаҫри комитечӗ Вӑрнар округӗнчи суйлав комиссин составне Вӑрнар МТС директорне Федор Семенович Никонов орденоносец кандидатурине тӑратма йышӑннӑ.

Етӗрне округӗнчи суйлав комиссин составне кандидатсем тӑратас ыйтупа Советски районри колхозсенче пухусем пулса иртнӗ. «Новый путь» колхоз колхозникӗсем хӑйсен чи лайӑх бригадирне Агриппина Матвеевна Юхтанова юлташа кандидата тӑратнӑ.

«Радио» колхоз колхозникӗсем колхоз счетоводне А. П. Пучков юлташа кандидата тӑратма йышӑннӑ.

ВКП(б) райкомӗ йышӑннӑ тӑрӑх, коммунистсен Советски районти организацийӗнчен Етӗрне округӗнчи суйлав комиссин составне ВКП(б) Советски райкомӗн пӗрремӗш секретарьне Калистрат Никитич Кудряшов юлташа кандидата тӑратма йышӑннӑ.

Шупашкарти чӑлха фабрикинчи рабочисен, инженерсемпе техниксен тата служащисен коллективӗ Шупашкар округӗнчи суйлав комиссин составне кандидатсем тӑратас ыйтӑва пӑхса тухнӑ хыҫҫӑн Алевтина Петровна Вишнякова стахановкӑна кандидата тӑратнӑ.

ВЛКСМ Шупашкар горкомӗ Шупашкар округӗнчи суйлав комиссин составне Пӗтӗм Союзри Ҫамрӑксен Ленинла Коммунистла Союзӗн хула организацийӗнчен ВЛКСМ Шупашкар горкомӗн секретарьне Ольга Николаевна Игнатьева юлташа кандидата тӑратма йышӑннӑ.

Чӑвашсен ялхуҫалӑх институчӗн студенчӗсен, профессорсемпе преподавателӗсен тата служащисен пухӑвӗ Шупашкар округӗнчи суйлав комиссин составне институт доцентне Александр Валентинович Плетнев юлташа кандидата тӑратма йышӑннӑ.

Парторганизаци лайӑх ӗҫлет

ЧУРАЧӐК. Пысӑк Чӑрӑш ял Советӗнчи партин пуҫламӗш организацине 1944 ҫулхи август уйӑхӗнче организациленӗ. Унччен вӑл кандидатсен группи ҫеҫ шутланнӑ, вӑл группӑра пурӗ те виҫӗ коммунист кӑна пулнӑ. Кандидатсен группине «9 мая» колхозри ферма заведующийӗ М. Павлова ертсе пынӑ.

Хальхи вӑхӑтра ҫав парторганизацире 9 коммунист шутланать. Парторганизацинчи коммунистсем ертсе пыракан ӗҫсенче лайӑх ӗҫлеҫҫӗ. «9 мая» колхозри ферма заведующийӗ М. Павлова ферма ӗҫне лайӑх туса пырать. Хӗле хатӗрленес тӗлӗшпе фермӑра пур ӗҫсене те туса ҫитернӗ, выльӑх апачӗ ҫителӗклӗ хатӗрлесе хунӑ. 1945 ҫулшӑн государствӑна ашкакай парса татнӑ.

Парторганизацинчи виҫӗ коммунист колхоз председателӗсем пулса ӗҫлеҫҫӗ. «9 мая» колхозра председатель пулса Георгиев юлташ ӗҫлет. Ҫак колхоз авӑн ҫапас, государствӑна тырӑ парас ӗҫсене районра чи малтан туса пӗтерне, вӑрлӑх хывса хатӗрленӗ.

Хальхи вӑхӑтра парторганизаци СССР Верховный Советне суйлама хатӗрленет. Коммунистсем суйлав Положенине ӑнлантарас ӗҫе ялти учительсене те хутшӑнтарнӑ. Колхозниксене суйлав Положенине ӑнлантарас тӗлӗшпе 4—5 занятии иртернӗ.

«Заря» колхоза коммунист Кузьмин юлташ ертсе пырать. Ку колхоз та авӑн ҫапса пӗтернӗ, государствӑна тырӑ парса татнӑ. Суйлав Положенине ӑнлантарас тӗлӗшпе кунта Кузьминпа Андреев юлташсем ӗҫлеҫҫӗ.

Коммунистсем лайӑх ӗҫлесе пынине пула, халӑх хушшинче вӗсем авторитетлӑ пулнипе, парторганизаци ӳссех пырать.

ВАСИЛЬЕВ.

Елчӗк районӗ вӑрман хатӗрлес ӗҫре

Вӑрман хатӗрлевӗн 1945—1946 ҫулсенчи кӗркуннепе хӗллехи сезонӗнче районри колхозсен Улатӑрпа Алтышево леспромхозӗнче ӗҫлемелле. Пурӗ районӗпе ҫак сезонра вӑрман хатӗрлевӗнче 150 ҫын ҫурран, 103 ҫын лашапа ӗҫлемелле. Анчах районри хӑшпӗр колхозсенче вӑрмана ӗҫ вӑйӗ уйӑрса ярасси чӑтма ҫук япӑх пулса пырать. Паянхи куна районӗпе пурӗ те 104 ҫын ҫурран, 101 ҫын лашапа тухса кайнӑ.

Ку тӗлӗшпе райсовет исполкомӗ хӑй вӑхӑтӗнчех ӗҫлеме тытӑннӑ. Ятарласах ял Советсемпе колхоз председателӗсен канашлӑвне ирттернӗ, вӑрман хатӗрлевӗн планне кашни колхозах ҫитерсе панӑ. Ҫапла пулин те хӑшпӗр колхоз председателӗсем вӑрман хатӗрлес ӗҫе кирлӗ пек хакламаҫҫӗ. Вӗсем «халӗ вӑрманта ӗҫлеме иртерех-ха, малтан ялхуҫалӑх ҫулне вӗҫлес пулать»,—тесе сӑмах ҫаптарса лараҫҫӗ. Сӑмахран, «Пахарь» колхоз председателӗ Семенов юлташ ку тарана ҫитсе те вӑрманта ӗҫлеме пӗр ҫын та, пӗр лаша та яман. Ҫавӑн пекех «Трактор», «Комбайн» колхозсем те вӑрмана ӗҫ вӑйӗ яма васкамаҫҫӗ.

Районри малта пыракан Ворошилов ячӗпе тӑракан, «Марс», «МОПР», «Путь Ленина», «Журавлевка» тата ытти колхозсем СССР Верховный Совечӗн суйлавӗсем ячӗне пыракан социализмлӑ ӑмӑртӑва хутшӑнса вӑрманта паха примерсем кӑтартса ӗҫлеҫҫӗ. Асӑннӑ колхозсем вӑрманта ӗҫлеме кирлӗ ӗҫ вӑйне планпа кӑтартнӑ чухлех уйӑрса янӑ. Ку колхозсенче вӑрман хатӗрлевӗнче ӗҫлеме уйрӑм бригадӑсем тунӑ, вӑл бригадӑсене ертсе пыма вӑрман ӗҫӗпе опытлӑ колхозниксене уйӑрнӑ.

Аслӑ Шӑхальри «Ново-Тюрино» колхоз членӗ Захар Паромонов Алтышево леспромхозӗнче хӑй, пӗччен 53 кубометр вутӑ турттарнӑ. Вӑл хӑйӗн ӗҫ нормине кулленех вӑтамран 180 процент тултарса пырать. Ӑна лайӑх ӗҫленӗшӗн леспромхоз 6 метр пусма парса премиленӗ. СССР Верховный Совечӗн суйлавӗсем ячӗпе пыракан социализмлӑ ӑмӑртӑва хутшӑнса, Паромонов юлташ «Ново-Тюрино» колхозӑн вӑрман турттармалли планне хӑй пӗччен тултарма обязательство илнӗ.

Т. ИВАНОВ.

ОСОАВИАХИМОВЕЦСЕН ЙЫШӖ ӲСЕТ

ОКТЯБРЬСКОЕ. «Память Ленина» колхозра Осоавиахим организацийӗ лайӑх ӗҫлет. Хальхи вӑхӑтра кунта ҫар ӗҫне вӗренмелли кружок организациленӗ. Унта ҫамрӑксем интересленсе вӗренме ҫӳреҫҫӗ. Ҫавна май Осоавиахим членӗсен йышӗ те ӳссех пырать.

ЛЕВ ТОЛСТОЙ

(Вăл вилнĕренпе 35 çул тултарнă май)

Лев Николаевич Толстойăн пурнăçĕпе пултарулăхĕ вырăс халăхĕн историйĕпе таччăн çыхăнса тăраççĕ. Унăн чапĕпе аслăлăхĕ пĕтĕм этемлĕхе прогресс çулĕпе чылай малалла янă вырăс халăхĕн аслăлăхне палăртса тăраççĕ.

Толстой 1828 çулта Ясная Полянăра, Тула хулинчен инçех мар вырăнта çуралнă. Унăн ашшĕ-амăшĕсен помещик имени крепостлă пурнăçпа пурăннă хресченсен пÿрчĕсемпе юнашар ларнă. Гениллĕ ача кинĕ Российăри пурнăçăн çав тери хирĕçÿллĕ тĕслĕхĕсене курнă. Тăрăшса ĕçлекенсем чухăн пурăннине тата ĕçлемен çынсем пуян пурăннине курса, вăл часах ырăпе усаллине уйăрса илме пĕлсе çитнĕ, киревсĕр ĕçсемшĕн пăшăрханнă.

Тĕрĕслĕхпе пĕртанлăхшăн тăни, халăха юратни, уншăн тăрăшни çаксем писателĕн шухăш-кăмăлĕн тĕп паллисем пулса тăнă. Леш тĕнчери ырлăхшăн кăлăхах тăрăшни Толстоя кăмăла кайми пулнă. вăл кунта, хамăр çĕр çинчех мĕнпур çынсене лайăх пурнăçпа пурăнтармалли практикăллă майсене шырама пуçланă. Вăл Российăра социальнăй тĕрĕслĕх тума кирли çинчен шухăшла пуçланă. «Российăн пĕтĕм тĕнчепе халăхшăн паха задачи —çĕр харпăрлăхĕсĕр общество йĕрки тăвас шухăша сарасси пулса тăрать», тесе çырнă вăл.

Толстой идея тĕлĕшпе аталаннин çак уйрăмлăхĕсем унăн пĕтĕм творчествинче палăрса тăнă. Толстой хăйĕн произведенийĕсене 1852-мĕш çулта пичетлеме пуçланă. Унăн çав тери пысăк пултарулăхне пурте çийĕнчех асăрханă. «Çак талант—çамрăк çыннăн, пурнăçри çĕнĕ вăйпа пурăнаканскерĕн; унăн нумай çулсем хушши пурăнмалла-ха... Эпир малашнехи çинчен çапла калатпăр: Граф Толстой халиччен пирĕн литературăна пани вăл малашне çырассин пуçламăшĕ çеç пулса тăрать-ха; анчах та çав пуçламăшĕ мĕн тери пуян та илемлĕ!» Çак сăмахсемпе вĕçленнĕ Н. Г. Чернышевскин 1856 çулта çырнă статьи, ăна вăл Толстойăн малтанхи произведенийĕсем—«Детство», «Отрочество» тата вăрçă калавĕсем пичетленсе тухнă хыççăн çырнă. Чернышевскин питĕ сивĕч сисĕмĕ ăна тин çырма пуçланă писателĕн малашнехи кунçулне тĕрĕс кăтартса пама май панă. Чернышевский Толстой пултарулăхĕн анлăшне çеç мар, унăн художествăллă уйрăмлăхĕсене те питĕ лайăх чухласа илнĕ.

Чăнах та ĕнтĕ, Толстой çырма пуçличчен никам та этем чунĕн диалектикине, унăн пĕтĕм шухăш-кăмăлне Толстой пек палăртса пама пултарайман. Анчах Толстой таланчĕн çав характерĕ ăна общество интересĕсемпе кĕрешĕвĕн сарлака тĕнчинчен пăрса яман, пĕччен çыннăн шухăш-кăмăлĕпе çеç пурăнтарман. Çын ĕçне Толстой унăн результачĕсем тăрăх хакланă. Çын Толстоя хăйĕн обществăри пурнăçĕпе, общество пурнăçĕ çине мĕнле пăхнипе интереслентернĕ.

Толстой Севастополь оборонинче пулса тÿрремĕнех сăнани ăна Российăн аслăлăхĕпе вăйĕн никĕсĕ чи малтан вырăс халăхĕ пулнине, простой вырăс çынни пулнине кăтартса панă. Толстой, хăй куçĕпе курса, «Севастопольские рассказы» ятлă калавсенче çапла çырнă: тĕрĕслĕхпе телейшĕн тăрăшакан вырăс çынни хăйĕн Тăван çĕршывне хĕруллĕн юратать, уншăн вăл пĕр каппаймасăр хăйĕн пурнăçне те пама хатĕр. «Савăнтаракан тĕп шухăш,—тенĕ Толстой,— Севастопольре курнине пĕтĕçтерсе каласа,—вырăс халăхĕн вăйне ниçта та хавшатма çуккине ĕненни пулса тăрать». Севастополе хÿтĕлекенсем хăйсем тăвакан ĕçсене «яланхи пекех, ытла вăй хумасăр тăваççĕ, вĕсем тата çĕр хут та ытларах тума пултарнине ирĕксĕрех ĕненетĕн... Вĕсем пурне те тума пултараççĕ», мĕншĕн тесен вĕсене «питĕ ырă сăлтав», «кашни çыннăн чĕринчи туйăм—Тăван çĕршыва юратни» хистесе тăрать.

Российăн аслăлăхĕпе чапĕн никĕсĕ — ĕçпе пурăнакан çын пулнă, анчах та çав çын патша режимĕнче чухăн та правасăр пурăннă. Толстойăн ырă кăмăлĕ, унăн чăнлăх туйăмĕ ун чухнехи общество йĕркипе хирĕçме пуçланă, мĕншĕн тесен çав общество масăссене чухăн пурăнтарас тата сахалтарахăшне мала хурса пуян пурăнтарас йĕрке çинче тытăнса тăнă. Хăйĕн шухăш-кăмăлĕ чăн пурнăçпа хирĕçни, этем тĕнчере тивĕçлипе пурăнманни Толстоя питĕ пăшăрхантарнă. Толстой çынсемпе общество, уйрăм çынпа коллектив пĕр-пĕринпе таччăн çыхăнса килĕштерсе пурăнасси çинчен шухăшлама пăрахман. «Казаки» ятлă повеçре вăл хăй вăйлă çынсене, çутçанталăка çывăх тăракан çынсене, пĕр пек шухăшланипе тата «вĕллери» пек пурнăçпа пурăнас туйăмпа çыхăнса тăракан çынсене кăмăлланине палăртса панă. Анчах та çав тĕнче вăл сăнлăхсен тĕнчи çеç пулнă. Хăй вăхăтĕнчи пурнăç çине çаврăнса пăхсан, Толстой тĕрĕслĕхшĕн тăрăшакан ырă çынна хăй таврашĕнчи тĕнчепе килĕштерсе пурăнмалли условисене тупайман.

Уйрăм çын халăхпа пĕрлешсе кайнине, нумай вĕреннĕ обществăри тÿрĕ кăмăллă вырăс çыннисем тăрăшни халăх интересĕсемпе пĕрлешнине Толстой халăх хавхаланнинче курнă, халăх 1812 çулта уйрăмах вăйлă хаваланнă. Çакă Толстойăн «Война и мир» ятлă романне анлă та аслă туса хунă. Толстой шухăшĕпе, Кутузовăн аслăлăхĕ пуринчен малтан вăл халăх кĕрешĕвĕпе, халăх хăй тĕллĕнех тăшмана хирĕç тăнипе пĕрлешме пултарни. халăх çиллине вăйлатса ярса организацилеме тăрăшни пулнă. Тăван çĕршыва юратни халăхпа унăн полководецĕн мĕнпур пултарулла вăйне мобилизациленĕ. Наполеон стратегийĕ вырăссен çав патриотла хавхаланăвне шута илмен, çавăнпа вăл начар та халсăр стратеги пулнă, хăйĕн Тăван çĕршывне хÿтĕлеме çĕкленнĕ халăхăн пуçарăвне хирĕç тăма пултараймăн. «Смоленскри пушар хыççăн,—тесе çырнă Лев Толстой «Война и мир» ятлă романĕнче,—ĕлĕкхи вăрçăсем пек мар вăрçă пуçланса кайрĕ. Хуласемпе ялсене çунтара-çунтара яни, çапăçнă хыççăн каялла чакни, Бородино патĕнче пырса çапса каллех каялла чакни, Мускав çунни, çарта çаратса çÿрекенсене тытни, транспортсене тыта-тыта илни, партизанла вăрçă, çаксем пурте "правилăсенчен пăрăнни пулнă». Çакăн çинчен çырса, писатель хăй вырăс халăхĕпе питĕ савăннине палăртнă, вырăс халăхĕ «йывăр минутсенче çавăн пек чухне ыттисем правило тăрăх мĕнле туни çинчен ыйтса тăмасăр, алă айĕнчи чукмара тытать те унпа ислетет,— кÿренме тата таварасшăн çунма пăрахса тăшмана йĕрĕнсе шеллеме пуçличченех ислетет».

Толстой чăн-чăн патриотизмăн, уйрăм çынна халăхпа пĕрлештерсе яракан патриотизмăн çав простой та хăватлă палăрăмĕсем массăсенчен тата ĕçрен таталса кайнă çынсен суя та пушă «патриотизмĕнчен» йăлтах урăхла пулнине кăтартать, çав çынсем халăх нушисемпе хĕнхурне хăйсене çÿлерех хăпарма май паракан пусмасем вырăнне çеç шутланă. Çавăнпа та Толстой «Война и мир» ятлă романра патшапа унăн таврашне тата обществăн çулти сийне критикăлани — патша Российăн условийĕсенче истори енчен çеç мар паха пулнă, вăл Толстой вăхăтĕнчи пурнăçшăн та питĕ паха пулнă.

Толстой хăйĕн «Анна Каренина» ятлă тепĕр пысăк романне пĕтĕмпех хăй вăхăтĕнчи пурнăç çинчен çырнă. Аннăпа Китти çинчен, Вронскипе Левин çинчен. Облонскипе Каренин çинчен çырни реформа хыççăнхи Россия çинчен, «пурте пăтрашса кайса тин çеç йĕркене кĕрекен» Россия çинчен çырнипе таччăн çыхăнса тăрать. Анна Каренинăн хурлăхлă кунçулĕ обществăри тĕрĕсмарлăха пĕр шеллемесĕр питлени пулса тăрать. Самодержавиллĕ государство, обществăн çÿлти сийĕ, пуçпулса тăракан мораль, дворянла-буржуалла обществăн йăлисем — çаксем пурте суяскерсем, моральсĕрскерсем, этеме хирĕç пыраканскерсем! Левин (вăл Толстой сăнлăхĕ пулса тăрать, пĕр ĕçлемесĕр çын вăйĕпе пурăнакан ушкăнăн намăссăрлăхĕпе тĕрĕсмарлăхĕнчен тарса яла каять. Вăл хăйĕн çемьипе пурăнса çĕре тата хресченсене çывăх пурăнса чăнлăх тупма, тÿрĕ кăмăлпа пурăнма ĕмĕтленет. Анчах та Левин умне вăл татса параймн çĕр ыйтăвĕ тухса тăрать. Левин—помещик, çакăн пирки çĕрсĕр асапланса пурăнакан хресченсемпе ун хушшинче питĕ пысăк уйрăмлăх пулса тăрать. Ырă та тÿрĕ кăмăлпа пурăнмалли майсене шырани те, алăпа ĕçлеме тăрăшни те Левинпа халăха тивĕçлипе пĕрлештереймессĕ.

«Воскресение» ятлă романăн геройĕ Нехлюдов помещиксен, эксплоататорсен пурнăçĕпе пурăнма пăрахать. Вăл хăйĕн çĕрне хресченсене парать, хăйĕн тăванĕсемпе пĕлĕшĕсене пăрахать, «простойланать», хăйĕн аллипе тăранса пурăнма хатĕрленет. Çак произведени Толстой вăхăтĕнчи йĕркесене калама çук хытă питлет. Эксплоататорла обществăн усаллăхне, суйнине, господасен намăссăрлăхĕпе хаярлăхне, ĕççыннисем асапланнине çак романра пĕр çемçетмесĕрех кăтартса панă.

Анчах та Нехлюдов, Толстой пек шухăшлаканскер, çапла шутлать: çав усаллăха пĕтермелли май массăсен революциллĕ кĕрешĕвĕ мар, кашни çын хăйне шухăш-кăмăл енчен лайăхлатса пыни, тĕн туйăмĕ тата усала вăйпа хирĕç тăманни пулса тăрать, тет. Çапла ĕнтĕ, обществăри тĕрĕсмарлăха питлени тата ăна пĕтермелли меслетсем Толстойăн пĕр-пĕринпе çыхăнса тăмаççĕ. Çакă вăл ăнсăртран пулнă япала мар. Вăл пурнăç хирĕçĕвĕсем пирки пулнă. Ленин çав хирĕçÿсене ÿссе пыракан капитализма хирĕç хресченсем мĕнле протесленипе, çав протестăн характерĕпе ăнлантарса панă. «Толстой Российăра буржуалла революци пулас умĕнхи темиçе миллион вырăс хресченĕн идейисемпе шухăш-кăмăлĕсене палăртса панипе аслă», — тесе çырнă Ленин.

Темиçе ĕмĕрхи пусмăрлăхпа эксплоатацире пурăнса, хресченсем питĕ çиленсе çитнĕ, калама çук хăюланнă. Вĕсем патша государствине, помещиксем çĕр тытса тăрас йĕркене нимĕн хăвармиччен аркатса тăкма тăрăшнă. Толстойăн произведенийĕсенче обществăллă çыхăнусене, общество йĕркисене пĕр шеллемесĕр критикăлани хресчен юхăмĕн революциллĕ енне палăртнă. Анчах, тепĕр енчен, темиçе ĕмĕр хушши чуралăхпа тĕттĕмлĕхре пурăннă пирки хресченсен чылай пысăк пайĕн шухăш-кăмăлĕ революциллĕ пулман. вĕсем алла хĕçпăшал тытса хирĕç тăма хăйман. Толстой усала вăйпа хирĕç тăмалла мар тесе вĕренти çав кая тăрса юлнă шухăш-кăмăлсене палăртнă.

Çапла вара, Толстой хăйне уйрăм вĕрентÿ пуçласа яма хăтланнинче XIX-мĕш ĕмĕртипе XX-мĕш ĕмĕр пуçламăшĕнчи хресчен юхăмĕн вăйсăрлăхĕпе çитменлĕхĕсем палăрнă, çав вăхăтрах унăн пултарулăхĕн критикăлла реализмĕнче, вăл общество йĕркисене çиленсе питленинче —кĕрешме пуçлакан хресчен массисен революциллĕ протесчĕ палăрнă.

Ленин Толстойăн калама çук пысăк художествăллă пултарулăхĕ йышлă миллионлă массăсен, хăйсем тĕллĕн пурăнма хатĕрленекенскерсен аслăлăхĕпе çыхăнса тăнине кăтартса панă. Ленин Толстоя вырăссен пĕрремĕш революцийĕн вăйĕпе вăйсăрлăхне кăтартакан куçкĕски тесе ят панă. Ленин тата çакна кăтартса панă: Толстойăн çитменлĕхĕсене Россия историйĕ хăй тÿрлетет, вĕсене халăх пурнăçĕ аталанса пыни, мĕнпур ĕççыннисен революциллĕ кĕрешĕвне рабочи класс ертсе пыни тÿрлетет, тенĕ.

Лев Толстой—кучухнехи Европăн калама çук аслă художникĕ пулса тăрать. Ленин Толстой çинчен Горькипе калаçнине Горький хут çине çырса хунă. Ленин çапла каларĕ. тет Горький:

«—Мĕн тери пысăк вăл, а? Мĕн тери хăватлă улăп вăл? Вот вăл художник... Тата мĕн тĕлĕнтерет. тетĕр эсир? Çав графчен литературăра чăн-чăн мужик пулман.

Унтан, ман çине куç хĕссе пăхса, çапла ыйтрĕ:

— Европăра кама унпа юнашар тăратма пулĕ-ши?

Хăех вара çапла ответлерĕ:

— Никама та тăратма çук!

Унтан, аллисене шăлкаласа, кулса ячĕ».

Толстой пултарулăхĕ пĕтĕм тĕнчешĕн паха пулса тăни—вырăс халăхĕ пĕтĕм тĕнчере историллĕ вырăн йышăнса тăнипе таччăн çыхăнса тăрать. Толстой вăл хăйĕн Тăван çĕршывĕн аслă ывăлĕ пулнă. Вăл хăйĕн халăхĕ тăванлăхпа телейшĕн революциллĕ кĕрешнине тата унăн патриотизмне палăртса панă, ирĕклĕхе тата чăнлăха юратакан çав халăх идейăпа мораль енчен аслă пулнине палăртса панă. Ромэн Роллан аса илсе çапла çырнă: «Эпĕ Толстой произведенийĕсене вуласа ăнланнă кунсем нихăçан та асран каймĕç... Пирĕн куç умĕнче аслă пурнăçăн пултарулăхĕ курăнса кайрĕ, çав пурнăçра пĕтĕм халăх, пĕтĕм çĕнĕ тĕнче палăрчĕ... Европăра çакăн пек сасă нихăçан та янăраманччĕ-ха».

Ĕç чăнах та çавăн пек пулнă. Толстой творчествинче пĕтĕм халăх палăрнă, çав творчество çĕнĕ тĕнче çинчен пĕлтернĕ, мĕншĕн тесессĕн вăл хатĕрленсе пыракан вырăс революцийĕн шурăмпуçĕ пулса тăнă. Çавăн пек сасă унччен пĕтĕм тĕнчипе те нихăçан та янраман, мĕншĕн тесен вырăс халăхĕ обществăна çавăн пек тĕпрен тата тĕрĕс улăштарнă пек урăх нимĕнле халăх та улăштарман.

Толстой 1910-мĕш çулта, кивĕ стильпе шутласан, ноябрĕн 7-мĕшĕнче вилнĕ. Вăл вилсен пĕтĕм этемлĕх хуйхăрнă. Вăл вилнĕренпе 35 çул иртрĕ ĕнтĕ, анчах та вăл çырнин вăйĕ те, илемлĕхĕ те чакмаççĕ. Шăп та пирĕн вăхăтра, совет вăхăтĕнче халăх ăна уйрăмах хытă юратса асăнать, унăн произведенийĕсен нихăçан манăça тухми страницисене вулать.

Толстой çырни вăрă-хурахла идеологие, ытти çынсене чуралантарас, ытти рассăсен прависене катас идеологие хирĕç кĕрешмелли аслă хатĕр пулса тăрать. Ахальтен мар ĕнтĕ гитлеровецсем Толстоя курайман. Анчах та реакцин усал вăйĕсем Толстоя ÿстерсе панă вырăс халăхĕн çапçутă генийĕ умĕнче ниме тăман пĕчĕк вăйсем çеç пулса тăчĕç.

Совет халăхĕ, большевиксен партийĕ ертсе пынипе. Отечественнăй аслă вăрçăра хăйĕн Тăван çĕршывĕн чыслăхĕпе никама пăхăнманлăхне фашистла захватчиксенчен сыхласа хăварнăскер, çĕнĕ тĕнче. илемлĕ те чаплă тĕнче тăвас çулпа çирĕппĕн пырать.

Аслă вырăс халăхĕн чаплă ячĕсем хушшинче улăп-писателĕн ячĕ нихăçан та асран каймĕ, Лев Николаевич Толстой çырнă произведенисем ĕмĕр-ĕмĕр пурăнĕç.

Профессор **В. КИРПОТИН.**

Чăваш АССР Совнаркомĕнче

РЕСПУБЛИКĂРИ ПРОМКОМБИНАТСЕН ОКТЯБРЬ УЙĂХĔНЧИ СОЦИАЛИЗМЛА ĂМĂРТĂВĔН ИТОГĔСЕМ ÇИНЧЕН

Республикăри промкомбинатсен октябрь уйăхĕнчи социализмлă ăмăртăвĕн итогĕсене пăхса тухса, Чăваш АССР Совнаркомĕ октябрь уйăхĕнче Йĕпреç райпромкомбиначĕ (управляющийĕ **Рубцов** юлташ. райсовет исполкомĕн председателĕ **Соколов** юлташ) мала тухнă тесе йышăннă. Йĕпреç райпромкомбиначĕ октябрьти производство планне пĕтĕм продукци енĕпе 102,5 процент, куллен кирлĕ таварсем енĕпе 107,8 процент тултарнă.

Социализмлă ăмăртура мала тухнă работниксене премилеме тата вĕсен пурнăç условийĕсене лайăхлатма Йĕпреç райпромкомбинатне хăйĕн планран иртерсе пухнă укçинчен 5.000 тенкĕ уйăрса памалла тунă.

Болгарири суйлавсем

СОФИЯ, ноябрĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Паян каçхине Софири радио çапла пĕлтерчĕ: пĕтĕм Болгарипе 4.504.735 суйлавçăран халăх пухăвĕн суйлавне 3.862.492 суйлавçă, урăхла каласан, 86 процент хутшăннă. Вăл шутран отечественнăй фронт кандидачĕсемшĕн 3.407.355 суйлавçă сасăланă, вăл сасăланă мĕнпур суйлавçăсен 88,2 проценчĕ пулать.

ВЕНГРИН ÇĔНĔ ПРАВИТЕЛЬСТВИНЕ ТУСА ХУНИ

БУДАПЕШТ, ноябрĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Вăхăтлăх халăх пухăвне суйласа лартнă пирки, Венгрин вăхăтлăх правительстви паян ирхине вырăнтан тухнă. Вăхăтлăх халăх пухăвĕн политикăллă комиссийĕ правительство вырăнтан тухнине йышăннă. Ялсенчи вак хуçасен партийĕн лидерне Тильди Золтана çĕнĕ правительство тума хушнă. Тильди çав правительствăна туса хунă, вăл правительствăна вара Вăхăтлăх халăх пухăвĕн политикăллă комиссийĕ çирĕплетнĕ. Çĕнĕ правительство паян присяга панă.

Венгрин çĕнĕ правительстви пуçĕнче премьер-министр Тильди Золтан тăрать. Правительствăра 18 член, вĕсенчен тăххăрăшĕ ялсенчи вак хуçасен партийĕнчен, тăваттăшĕ—коммунистсен партийĕнчен, тăваттăшĕ — социал-демократсен партийĕнчен, пĕри—хресченсен нациллĕ партийĕнчен

Францири правительство кризисĕ

Де Голль Гуэн патне янă çыру

ПАРИЖ, ноябрĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Кунта де Голль генерал ноябрĕн 18-мĕшĕнче каçхине нацин учредительнăй пухăвĕн председателĕ Гуэн патне янă çырăва пичетлесе кăларнă. Çав çырура де Голль хăйне çĕнĕ правительство тума панă мандата учредительнăй пухăва каялла тавăрса парасси çинчен хăй маларах калани çинчен аса илнĕ. Де Голль çапла каланă: эпĕ учредительнăй пухун шухăшне пĕлес тесе мандата каялла тавăрса патăм. Де Голль çапла ыйтнă: учредительнăй пухун çав мандата манран илесси çинчен е мана тепĕр хут каялла парасси çинчен татăклă решени йышăнмалла.

ПАРИЖ, ноябрĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Парижри радио çапла пĕлтерет: паян 15 сехетре Феликс Гуэн председатель пулса ертсе пынипе нацин учредительнăй пухăвĕн ларăвĕ уçăлнă. Оратор Бомель депутат («хирĕç тăрса кĕрешекен демократсемпе социалистсен союзĕ») де Голль генералĕ ноябрĕн 13-мĕшĕнче панă полномочие тепĕр хут çирĕплетсе пама сĕннине сасăлаттарнă. Социалистсем де Голль генералăн виçĕ тĕп партин представителĕсенчен правительство тăвас тĕлĕшпе малашне те консультаци туса пыма кирли çинчен тÿрлетÿ кĕртме сĕннĕ. Радикал-социалистсем Бомель сĕнĕвĕшĕн сасăлама пулнă. Жак Дюкло хăйĕн сăмахĕнче те Голль коммунистсене кÿрентермелле калани çинчен палăртнă. Вăл çапла каланă: коммунистсем Бомель сĕнĕвне хирĕç сасăлĕç, тенĕ. Социалистсен представителĕ Филип çапла каланă: социалистсем хăйсен сĕнĕвне çине тăрсах хÿтĕлĕç, мĕншĕн тесен вĕсем пĕрлĕхлĕ правительство тăвас тĕлĕшпе калаçса таталассине шанса тăраççĕ. «Халăхăн республикăллă юхăмĕнчен» Шуман тата «Республикăллă пĕрлешÿрен» Рамарони Бомель сĕнĕвне майлă каланă. Вара социалистсен тÿрлетĕвне майлă 358 депутат, ăна хирĕç 39 депутат сасăланă. Коммунистем пачах та сасăламан. Бомель сĕнĕвне майлă 400 депутат, ăна хирĕç 163 депутат сасăланă.

ТУНИСРИ ДОКЕРСЕМ ИСПАНИЕ ЯМАЛЛИ ТАВАРА ТИЕМЕ КИЛĔШМЕН

БРАЗЗАВИЛЬ, ноябрĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Браззавильри радио çапла пĕлтерет: ĕнер Францири ĕç федерацийĕ çакăн пек пĕлтерÿ пичетлесе кăларнă:

Францири ĕç федерацийĕн бюровĕ тата докерсен федерацийĕ Тунисри докерсем (профсоюз членĕсем), Франко Испанийĕн «Кандидат» ятлă судни çине фосфат тиенине хирĕçлесе ĕçлеме пăрахни çинчен сÿтсе-явнă. Ĕç федерацийĕн бюровĕпе докерсен федерацийĕ хăйсем Тунисри докерсемпе пĕр шухăшлă пулни çинчен пĕлтереççĕ тата çапла калаççĕ: Франко Испанине таварсем яма пăрахиччен çавăн пек хирĕçÿсем пулса пырĕç, вĕсем йышлăланса пырĕç. Францири ĕç федерацийĕ Франко Испанийĕпе дипломатиллĕ çыхăнса тăма тата унпа суту-илÿ тума пăрахма ыйтать.

ЯВА УТРАВĔ ÇИНЧИ ЛАРУ-ТĂРУ

ЛОНДОН, ноябрĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Лондонри радио çапла пĕлтерет: Ява утравĕсем çинчен илнĕ хыпарсем тăрăх, Батавире тата ытти хуласенче те лару-тăру питĕ çивĕчленсе çитнĕ. Англипе Инди çарĕсем Семарангра пуç пулса тăраççĕ. Семаранг хулинчи Индонези губернаторне тытса хупнă. Индонезри радио станци Индонези çыннисене пурне те Семаранг хули районне пухăнма чĕннĕ. Вырăнти çынсене пурне те хупса лартнă. Семаранг хулинче çĕрĕпех персе тăнă. Сурабайăра индонизиецсем Англи пехотине хирĕç тупăсемпе пенĕ

США-ри ЗАБАСТОВКĂСЕМ

НЬЮ-ЙОРК, ноябрĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). США промышленноçĕн нумай отраслĕсенче рабочисемпе предпринимательсем çапла хирĕçеççĕ.

Форд завочĕсенчи рабочисен пысăкрах пайĕ забастовка тăвассишĕн сасăланă. Автомобиль промышленноçĕнчи рабочисен Производствăллă профсоюзсен конгресне кĕрекен профсоюзĕн представителĕсем çапла калаççĕ: «Дженерал Моторс» компанийĕ рабочисем ĕç укçине 30 процент ÿстерме ыйтнине йышăнман, вăл ĕç эрнине 5 сехет ÿстерсен ĕç укçине 8 процент ÿстерме килĕшнĕ. «ПМ» хаçат çапла çырать: «Дженерал Моторс» компанийĕпе рабочисем хирĕçсе каяссине пĕтерсе лартма çук, тет.

Суднăсем тăвакан питĕ пысăк предприниматель Хиггинс, 2.000 рабочи забастовка пуçласан, Çĕнĕ Орлеанри виçĕ верфьне те хупнă та мĕнпур рабочисене ĕçрен кăларса янă.

Фордăн Канадăри Виндзоре хулинчи завочĕсенче 10 пин рабочи забастовка тăвать.

ФИНЛЯНДИРИ ВĂРÇĂ ПРЕСТУПНИКĔСЕ НЕ СУД ТУМА ЧАРĂННĂ

ХЕЛЬСИНКИ, ноябрĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Ноябрĕн 17-мĕшĕнче Финляндири вăрçă преступникĕсене суд тăвакан судăн ларăвĕнче судăн малашнехи ларăвĕсене пĕр уйăхлăха тăсас пирки панă сĕнÿсем çинчен енсем кĕске сăмахсем тухса каланă. Судăн ларăвĕсем çĕнĕрен пуçланиччен айăпланакансене ирĕке кăларма сĕнÿ панă. Сÿтсе-явнă хыççăн суд судăн ларăвĕсене çĕнĕрен декабрĕн 10-мĕшĕнче пуçласа яма йышăннă. Рюти, Рангель, Линкомиес тата Рамсай хăйсене ирĕке кăларма ыйтнине суд йышăнман. Таннера, Рейникка, Кивимякие тата Кукконена суд ирĕке кăларма йышăннă. Вĕсене 1945 çулхи декабрĕн 10-мĕшĕнче 10 сехетре ирхине суд ларăвне пыма хушнă.

Айăпланакансемпе вĕсене хÿтĕлекенсене судри мĕнпур документсемпе, çавăн пекех тата Хорнборг комитечĕн вывочĕсемпе паллашма май панă

ФИНЛЯНДИ ГИТЛЕРОВЕЦĔСЕМ ШВЕЦИРЕ ПЫТАНСА ПУРĂНАÇÇĔ

ХЕЛЬСИНКИ, ноябрĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). «Вапаа Сана» хаçат «Финлянди офицерĕсем-нацисчĕсем Швецире» ятлă статья пичетлесе кăларнă. Çав статьяра Финлянди офицерĕсен-гитлеровецĕсен пĕр пайĕ хăй вăхăтĕнче Финляндирен тĕрлĕ майсемпе Швецие килнĕ тенĕ хыпар тĕрĕссине Швецири телеграф агентстви çирĕплетсе пани çинчен çырнă. Çав офицерсем çарта вăрланă радиоаппаратсем нумай илсе пынă. Хальхи вăхăтра çав аппаратсен пĕр пайне Финляндие тавăрса панă, пĕр пайне Швеци влаçĕсем тытса илнĕ. Çав офицерсен шутне Неро капитан, Лаутакари майор, Каламаа полковник, Паасонен полковник тата ыттисем те кĕреççĕ, тесе çырать хаçат.

ПРАГĂРА ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ СТУДЕНТСЕН КОНГРЕСĔ УÇĂЛНĂ

ПРАГА, ноябрĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Ноябрĕн 17-мĕшĕнче Прага хулинче пĕтĕм тĕнчери студентсен конгресĕ уçăлнă. Конгреса демократиллĕ çĕршывсенчен нумайĕшĕнчен студентсен делегачĕсем пынă.

Ноябрĕн 17-мĕшĕнче каçхине Вацлав площадĕнче—Прагăри чи пысăк площадьре питĕ йышлă манифестаци пулса иртнĕ. Çав манифестаци пĕтĕм тĕнчери студентсен конгресĕ уçăлнă ятпа пулнă.

Ноябрĕн 19-мĕшĕнче комиссисен канашлăвĕсем тата конгресс пленумĕ пулса иртмелле.

«ДИНАМО» ФУТБОЛИСЧĔСЕМ КАРДИФРА ÇĔНТЕРНĔ

ЛОНДОН, ноябрĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Мускаври «Динамо» командин футболисчĕсем Кардиф футболисчĕсене çĕнтернĕ. Вĕсем Кардиф футболисчĕсен хапхине 10 пÿске çапса кĕртнĕ. «Динамо» футболисчĕсен хапхине пĕр пÿске çапса кĕртнĕ.

АРГЕНТИНА ПРЕЗИДЕНТНЕ СУЙЛАССИ ÇИНЧЕН

НЬЮ-ЙОРК, ноябрĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Юнайтед Пресс агентствин корреспонденчĕ Буэнос-Айресран пĕлтернĕ тăрăх, Аргентина правительстви çапла каланă: президента апрелĕн 7-мĕшĕнче суйлама йышăннăччĕ. ăна тата каярахпа суйламалла пулать. Хăçан суйлассине тепĕр эрнере пĕлтерĕпĕр, тенĕ.

Анастасия Севостьянова чăваш республикинчи апат-çимĕç промышленноçĕнче ĕçлекен чи лайăх стахановкăсенчен пĕри. Лайăх ĕçленĕшĕн ăна иртнĕ çул СССР Апат-çимĕç промышленность Халăх Комиссариачĕ «Апат-çимĕç промышленноçĕн отличникĕ» значокпа наградăланă. Октябрь уйăхĕ уйăхĕ уммĕнхи ăмăртăва хутшăнса вăл ертсе пыракан бригада хăйĕн уйăхри задание 260 процент тултарнă.

Ÿкерчĕк çинче: Канашри апат-çимĕç комбинатĕнчи премĕксем тăвакан цехри стахановка-бригадир Анастасия Александровна Севостьянова.

Н. ДАНИЛОВ фотоÿкерчĕкĕ.

Çулталăкри производство планне срокчен тултарассишĕн

ÇĔМĔРЛЕ. В. М. Молотов юлташ «Октябрьти Социализмлă Аслă Революци 28 çул тултарни» çинчен тунă доклад хаçатсенче пичетленсе тухсанах, районри промышленность предприятийĕсемпе артельсенче митингсем пулса иртрĕç. Кирпĕч заводĕнче ĕçлекенсем Молотов юлташ доклачĕпе хавхаланса 1945 çулхи производство планне Сталинла Конституци кунĕ тĕлне тултарма обязательство илчĕç. Халĕ завод коллективĕ хăйĕн обязательствине пурнăçлассишĕн социализмлă ăмăртăва anлăн сарса пырать.

Ĕçре уйрăмах Е. Горбунова, П. Исаева, Е. Новичкова юлташсем паха тĕслĕхсем кăтартаççĕ. Вĕсем хăйсен кулленхи ĕç нормине 140—150 процента яхăн тултарса пыраççĕ.

И. СОРОКИН.

УЙĂХРИ ПЛАНА 102 ПРОЦЕНТ ТУЛТАРНĂ

Мÿркаш ялповĕ (председателĕ М. Григорьев юлташ) октябрь уйăхĕнчи таварçаврăнĕш планне 102 процент тултарнă.

Октябрь уявĕ умĕнхи ăмăртура уйрăмах Андреева Кузьмина, Кириллова продавщицăсем паха тĕслĕхсем кăтартса ĕçленĕ.

ÇĔНĔ ФЕЛЬДШЕР ПУНКЧĔ

СОВЕТСКОЕ. Этмен ял Советĕнче çĕнĕрен фельдшер пункчĕ уçрĕç. Колхозсем пулăшнипе пункт валли çĕнĕрен илемлĕ те таса çурт туса лартнă. Пунктри фельдшер Е. Ижеева, Отечественнăй вăрçăра пулăшскер, халăха медицина пулăшăвĕ парас тĕлĕшпе тăрăшса ĕçлет, ерекен чир-чĕр çинчен калаçусем ирттерет. Фельдшер пункчĕ хĕле пур енчен те аван хатĕрленнипе кĕтсе илчĕ

7 ÇУЛ СЧЕТОВОДРА

Чурачăк районĕнчи «Малти Ямаш» колхозри Ира Прокуророва 1938 çултанпа колхозра счетовод пулса ĕçлет. Прокуророва юлташ хăйне шанса панă ĕçе юратса тăвать, учетпа отчет ĕçне вăхăтра туса пырать. Колхозри бригадирсене колхозниксен ĕçне мĕнле шута илмеллине яланах вĕрентет. Çавăнпа та Прокуророва юлташа колхозниксем юратса хисеплеççĕ.

А. ИВАНОВ.

САД ПАХЧИ ТУНĂ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. «Красный Борденер» колхоз ял çумĕнчи вăрман уçланкинчи 3 гектар çине 600 тĕп улмуççи тата ытти çимĕç йывăççисем лартса сад турĕ. Улмуççисене хĕлле юр пусасран патаксем лартса çирĕплетнĕ тата сивĕпе шăнса пĕтесрен улăмпа чĕркенĕ. Сад пахчине 67 çулхи Ефрем Семенов пăхать. Улмуççи тымарĕсем шăнса ан пĕтчĕр тесе, вĕсем тавра юр купаласа хытарнă

С. ВИКТОРИНОВ.

ÇУЛИЙĔР ПЛАННЕ 406 ПРОЦЕНТ ТУЛТАРНĂ

КОМСОМОЛЬСКОЕ. Район 1945 çулхи çулийĕр ĕçĕсен планне ноябрь уйăхĕ тĕлне 406 процент тултарнă. Ку ĕçре «Искра 1-ое», «Ударник», «Мурат», «Дубрава», «Трактор», «Нива» колхозсенчи çулийĕр бригадисем лайăх ĕçленĕ.

3 ПУТЕК ИЛНĔ

Октябрьски районри «20 лет Чувашии» колхозра пăру пăхакан М. Ситкова юлташ кăçал 24 пăру пăхса çитĕнтернĕ. Çавăншăн ăна ĕçшĕн хушса тÿлемелли йĕрке тăрăх 3 путек панă.

Ответлă редактор заместителĕ Н. С. СТЕПАНОВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: гор. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн—0-67, заместителĕн — 2-89, секретариатăн—4-26, пропаганда пайĕн—2-89, парти пурнăç пайĕн—3-97, промышленность пайĕн—3-99 ялхуçалăх пайĕн—3-99, рабселькорсен пайĕн—0-67, издательство конторин — 0-23.

НТ 00680 Типография № 1 Управления полиграф промышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2. ф. б. 59х42. 1 п. л. Тираж 10.000 экз.